"АСАТТЕ ХАЛАПĔСЕМ" конкурс

Çĕрпӳри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 2-мĕш вăтам шкулта чăваш чĕлхине тата Мухтавлă ентешсен çулталăкне халаллланă тĕрлĕ ĕç-пуç пулса иртет. Ака уйăхĕн 26 – мĕшĕнче те Çĕрпӳри 2-мĕш шкулăн акт залĕ лăк туллиех пулчĕ. Ачасене унта "АСАТТЕ ХАЛАПĔСЕМ" конкурс пуçтарчĕ. Конкурс пуçланиччен ачасем « Чăваш енĕн паллă çыннисем» ятлă викторинăна хутшăнчĕç. Викторина хуравĕсене вĕсем çăмăллăнах тупрĕç. "АСАТТЕ ХАЛАПĔСЕМ" конкурса 1-8 класра вĕренекенсем хутшăнчĕç. Конкурса хутшăнакансем пĕр - пĕринпе тупăшсах И. Я. Яковлев калавĕсене вуларĕç. Ачасем конкурса тарăшса хатĕрленни курăнчĕ. И.Я.Яковле калавĕсене пĕчченшерĕн те вуларĕç, ушкăнпа выляса та кăтартрĕç. Ачасем уйрăмах çак калавсене килĕштерни палăрчĕ: «Автан», "Сармантей", "Лаша шырани", "Кулачă», "Çуркунне", "Кахалпа Юлхав", «Йăлăнтарни», «Пулăра». Иван Яковлев калавĕсем ачасене ырра, тĕрĕслĕхе, ĕçченлĕхе, ваттисене хисеплеме вĕрентеççĕ.

И.Я.Яковлев пулас ăрăва тăван чĕлхене упрама пиллесе каланă: «Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнче курăмне тăван чĕлхе чун парать. Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлӳ çук». Унăн «Халалĕ» вара пирĕн ăрăва хăварнă ырă сунăм пулса тăрать.